Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

41 (7466) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи майăн (çу) 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Çур аки – 2007**

## Пĕрисем вĕçлеççĕ. Теприсем?..

Районти тăвată хуçалăх (“Герой” – 11 гектар, “Оринино” – 12 гектар, “ДаАн” – 5 гектар, Бархаткин хресчен (фермер) хуçалăхĕ – 25 гектар) çĕр улми лартма тухнă. “Иккĕмĕш çăкăр” кăçал районĕпе 1085 гектар пулмалла пулсан, ĕнерхи кун тĕлне ăна пурĕ 53 гектар кăна лартнă. Анатолий Беловăн паянхи сăн ӳкерчĕкĕсенче эсир “Оринино” ял хуçалăх производство кооперативĕнчи çĕр улми лартакан звенона куратăр. В. Замков механизаторпа В. Музыков, В. Ступин акаçăсем ку ĕçе çывăх вăхăтрах вĕçлес шутлă. Хуçалăхра çур аки епле пынипе паянхи хаçатăн 7-мĕш страницинче тĕплĕнрех паллашма пултаратăр.

Хуçалăхсем акмалли вăрлăхăн 44 процентне (1688 тонна) имçамланă пулсан, ку ĕçе Ильич яч. хис., Ленин яч. хис., “Сеятель”, “Восток”, Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче, “Рассвет” агрофирмăра 100 процент пурнăç-





ланă.

Кĕрхи культурăсене районĕпе 2272 гектар çинче (69,3 процент) апатлантарнă.

Нумай çул ӳсекен курăксене 3516 гектар (28 процент) апатлантарнă, 7930 гектарĕ çинче (64 процент) нӳрĕк тытнă.

Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче пĕр гектар пахча çимĕç лартнă. Районĕпе вара пахча çимĕç 61 гектар пулмалла.

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ÇУРХИ УЙХИР ĔÇĔСЕМ ЕПЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**
**(çу уйăхĕн 19-мĕшĕ тĕлне)**

**Колонкăсенче: 1. Çĕр хатĕрленĕ. 2. Çурхи культурăсем акнă. 3. Пĕр çул ӳсекен курăксем акнă. 4. Выльăх кăшманĕ акнă (процентпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| Е.Андреев яч. хис. | 75 | 89 | 15 | 0 |
| “Волга” | 53 | 50 | 0 | 0 |
| “Восток” | 100 | 100 | 100 | 100 |
| “Герой” | 60 | 81 | 58 | 100 |
| “Агро-Урожай” | 0 | 0 | 0 | 0 |
| К.Иванов яч. хис. | 45 | 43 | 0 | 0 |
| Ильич яч. хис. | 97 | 94 | 50 | 75 |
| “Колос” | 53 | 40 | – | – |
| Ленин яч. хис. | 71 | 77 | 0 | 75 |
| “Лидер” АФ | 26 | 15 | 0 | 0 |
| “Дружба” АФ | – | – | – | – |
| “Оринино” | 100 | 94 | 126 | 100 |
| “Передовик” | 56 | 45 | 100 | – |
| “Свобода” | 59 | 77 | 51 | 100 |
| “Сеятель” | 40 | 28 | – | 0 |
| Суворов яч. хис. | 51 | 43 | – | – |
| “Рассвет” АФ | 100 | 93 | 20 | – |
| “Нива” АФ | – | – | – | – |
| “Ударник” | 37 | 36 | 0 | – |
| Чапаев яч. хис. | 46 | 42 | 29 | 60 |
| “Чемеево” | 42 | 41 | 0 | – |
| Чкалов яч. хис. | 100 | 100 | 0 | 100 |
| ДаАн | 25 | 0 | – | – |
| Михайлов КФХ | 0 | 0 | – | – |
| Матвеев КФХ | 100 | 90 | – | – |
| Сретинский КФХ | 64 | 60 | – | – |
| Бархаткин КФХ | 100 | 100 | – | – |
| **РАЙОНĔПЕ** | **57,5** | **55,2** | **26,6** | **62,8** |

**“Радиохум – хаçат страницинче: ыйту пур. Хуравне пĕлесшĕнччĕ”**

## “Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ” ята камсене параççĕ?

***Çак ыйту районта пурăнакансенчен чылайăшне хумхантарать. Районта, вырăнсенче иртекен тĕрлĕрен мероприятисенче аслă ăрури çынсемпе тĕл пулнă чух та часчасах параççĕ ăна. Районти социаллă хӳтлĕх пайне те çак ыйтăвăн хуравне пĕлме килекенсем çук мар. Çавăнпа та паян хаçат вулакансене кăсăклантаракан çак ыйту çине хаваспах хуравлама пулчĕ Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. ПЕТРОВА:***

– “Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ” ята “Раççей Федерацийĕнчи ĕç пенсийĕ çинчен” федераллă саккунпа килĕшӳллĕн пенси палăртнă хыççăн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе Чăваш Республикин патшалăх наградисене илнисене параççĕ. Унта “Раççей Федерацийĕнчи ĕç пенсийĕ çинчен” федераллă саккунпа килĕшӳллĕн ватăлсан паракан пенсие илме право паракан ӳсĕме çитсе, тĕрлĕ сăлтавсемпе пенси илекенсем е ĕçшĕн (службăшăн) ĕмĕрлĕх парса тăмалли тӳлеве илекенсем кĕреççĕ.

**– Çак сумлă ята илес ĕç мĕнле пулса пырать?**

– “Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ” ят пама ыйтса çырнă заявленисене социаллă хӳтлĕх пайĕнче йышăнатпăр. Заявленипе пĕрле 3х4 калăпăшлă сăн ӳкерчĕксем тата çак документсем кирлĕ: Чăваш Республикин патшалăх наградине илнине çирĕплетекен документ, “Раççей Федерацийĕн ĕç пенсийĕ çинчен” федераллă саккунпа килĕшӳллĕн пенси палăртнине е асăннă саккунпа килĕшӳллĕн ватăлсан паракан пенсие илме вăхăт çитнине çирĕплетекен документ (пенси палăртакан орган панă справка).

Тата çакна та палăртса хăвармалла. Документсене йышăннă чухне эпир “Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ” ят илес текенсене регион е республика шайĕнчи ытти çăмăллăхсене илме право паракан сăлтавсем пирки те сведенисене тултарса çырма ыйтатпăр. Çав сведенисем çак сумлă ята пама кăларакан йышăну çине нимĕнле витĕм те кӳмеççĕ.

**– Нина Пантелеевна, ĕç ветеранĕ пулма пулăшакан Чăваш Республикин патшалăх наградисен шутне мĕнлисем кĕреççĕ?**

– Чăваш Республикин 2005 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнчи 15-мĕш номерлĕ “Чăваш Республикин патшалăх наградисем çинчен” саккунĕпе, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Указĕсемпе, Чăваш Республикин Верховнăй Совечĕн тата Чăваш Республикин Патшалăх Совечĕн Постановленийĕсемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин патшалăх наградисен шутне çаксем кĕреççĕ: Чăваш Республикин чи аслă хисеп ячĕ – “Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ”, “За заслуги перед Чувашской Республикой” орден, Чăваш Республикин Хисеп грамоти, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Хисеп грамоти, Чăваш Республикин Верховнăй Совечĕн Хисеп грамоти, “За заслуги перед Чувашской Республикой” орденăн медалĕ.

Çавăн пекех Чăваш Республикин патшалăх наградисен шутне тĕрлĕ отрасльте ĕçлесе илнĕ хисеплĕ ятсем кĕреççĕ:

“Народный артист Чувашской Республики”;
“Народный артист Чувашской АССР”;
“Народный писатель Чувашской Республики”;
“Народный писатель Чувашской АССР”;
“Народный поэт Чувашской Республики”;
“Народный поэт Чувашской АССР”;
“Народный художник Чувашской Республики”;
“Народный художник Чувашской АССР”;
“Заслуженный агроном Чувашской Республики”;
“Заслуженный агроном Чувашской АССР”;
“Заслуженный артист Чувашской Республики”;
“Заслуженный артист Чувашской АССР”;
“Заслуженный архитектор Чувашской Республики”;
“Заслуженный архитектор Чувашской АССР”;
“Заслуженный ветеринарный врач Чувашской Республики”;
“Заслуженный ветеринарный врач Чувашской АССР”;
“Заслуженный врач Чувашской Республики” ;
“Заслуженный врач Чувашской АССР”;
“Заслуженный деятель искусств Чувашской Республики”;
“Заслуженный деятель искусств Чувашской АССР”;
“Заслуженный деятель науки Чувашской Республики”;
“Заслуженный деятель науки Чувашской АССР”;
“Заслуженный деятель науки и техники Чувашской АССР”;
“Заслуженный деятель техники Чувашской АССР”;
“Заслуженный землеустроитель Чувашской Республики”;
“Заслуженный зоотехник Чувашской Республики”;
“Заслуженный зоотехник Чувашской АССР”;
“Заслуженный изобретатель Чувашской Республики”;
“Заслуженный изобретатель Чувашской АССР”;
“Заслуженный конструктор Чувашской АССР”;
“Заслуженный лесовод Чувашской Республики”;
“Заслуженный лесовод Чувашской АССР”;
“Заслуженный машиностроитель Чувашской АССР”;
“Заслуженный механизатор Чувашской Республики”;

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Республикăра**

## Чăваш Ен Тĕнче Кубокне хатĕрленет

Шăпах тепĕр çулталăкран, çу уйăхĕн варринче, шурă Шупашкар тĕнчери чи хăвăрт утакансен пысăк уявне хутшăнакансене кĕтсе илĕ, вĕсен çитĕнĕвĕсемпе пĕрле савăнĕ. Унччен спортсменсене чыслăн кĕтсе илсе ăсатса яма, тупăшма, хамăр республика çинчен ырă шухăш-кăмăл хăварма чылай ĕç пурнăçлама тивет. Ытлари кун Правительство çуртĕнче Сергей Гапликов премьер-министр ертсе пынипе 2008 çулта хăвăрт утассипе Тĕнчен XXIII Кубокне Шупашкарта ирттерме хатĕрленекен йĕркелӳ комитечĕн анлă ларăвĕ пулнă. Комитет членĕсем икĕ ыйту пăхса тухнă: спорт объекчĕсемпе сооруженийĕсен тата трасса тăрăмĕ, Тĕнче Кубокĕн символикиллĕ сувенир продукцине хатĕрлесси.

Шупашкар мэрĕ Николай Емельянов тупăшу иртмелли вырăнсене юсаса çĕнетме палăртни çинчен пĕлтернĕ. Ларура юсав ĕçĕсене вĕçлемелли вăхăта çирĕплетнĕ. Çавăн пекех Тĕнче Кубокĕ Шупашкарта пуçланиччен залив хĕрринчи “Сăвар” хăна çуртне, Б. Хмельницкий урамĕнчи кану центрне, Афанасьев урамĕнчи çемье канăвĕн комплексне тата ытти объекта вĕçлесе хута ярĕç. Строительство графикпа килĕшӳллĕн пырать.

Паянах культура программине хатĕрлеме тытăннă. Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Сергей Гапликов Шупашкарта иртекен Тĕнче Кубокĕнче тупăшакан спортсменсемпе хăнасем пирĕн патра хăйсене канлĕ туйччăр тесе вĕсем валли мĕн пур услови тумаллине палăртнă.

**Официально**

## Итоги проведения публичных слушаний по проектам решений о внесении изменений и дополнений в Уставы сельских поселений Моргаушского района ЧР

17 мая 2007 года прошли публичные слушания по проектам решений о внесении изменений и дополнений в Уставы Ярославского, Юнгинского, Москакасинского, Большесундырского, Ильинского, Сятракасинского, Кадикасинского, Ярабайкасинского, Шатьмапосинского, Юськасинского, Александровского, Чуманкасинского, Тораевского, Хорнойского, Моргаушского и Орининского сельских поселений Моргаушского района ЧР.

На указанных выше публичных слушаниях были приняты следующие решения:

1. Одобрить проекты решений о внесении изменений и дополнений в Уставы Ярославского, Юнгинского, Москакасинского, Большесундырского, Ильинского, Сятракасинского, Кадикасинского, Ярабайкасинского, Шатьмапосинского, Юськасинского, Александровского, Чуманкасинского, Тораевского, Хорнойского, Моргаушского и Орининского сельских поселений Моргаушского района ЧР.

2. Рекомендовать Собраниям депутатов Ярославского, Юнгинского, Москакасинского, Большесундырского, Ильинского, Сятракасинского, Кадикасинского, Ярабайкасинского, Шатьмапосинского, Юськасинского, Александровского, Чуманкасинского, Тораевского, Хорнойского, Моргаушского и Орининского сельских поселений принять решение о внесении изменений и дополнений в Уставы сельских поселений Моргаушского района ЧР.

**Çарпа спорт вăййисенче**

## Çамрăк армеецсем вăй виçĕç

Район администрацийĕн пуçлăхĕн майăн 11-мĕшĕнчи 232 № йышăнăвĕпе çамрăк армеецсен районти «Зарница» тата «Орленок» çарпа спорт вăййисене майăн 21-мĕшĕнчен тытăнса майăн 23-мĕшĕччен ирттереççĕ. Çавна валли оргкомитет туса хунă, ăна район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов ертсе пырать. Унăн çумĕ – пай пуçлăхĕн тĕп специалисчĕ Г.Г. Быкова.

**Хамăр инф.**

**Юбилей**

## *Саламлатпăр*



Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра, мăшăра, аттене, кукаçие, асаттене, тăвана – Ярославка ялĕнче пурăнакан **Виссарион Семенович АНТОНОВА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр, иксĕлми телей, чун хăвачĕ, хĕвеллĕ кун-çул тата нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр. Санăн ырă кăмăлушăн, чун-чĕре ăшшишĕн тав тăватпăр, сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕпе кĕрӳшĕ, тăватă мăнукĕ, тăванĕсем, юлташĕсем, çывăх çыннисем.**